**Çак кунсенче пĕтĕм Раççей халăхĕ Сталинград хули патĕнче нимĕç фашисчĕсен çарне çапса аркатни 60 çул тултарнине паллă тăвать, паттăрла çапăçса пуçĕсене хунă салтаксене асăнать, сывă юлнисене хисеплесе чыс тăвать.**



# СЕРГЕЙ ТЕТЕН ÇУХАЛНĂ ЙĔРĔПЕ

Çак савăнăçлă уява эпĕ пĕр хурланса, пĕр савăнса кĕтсе илтĕм. Хаяр çапăçăва манăн Сергей тете те хутшăннă-çке, анчах малтанхи кунĕсенчех тăшмана хирĕç паттăррăн кĕрешсе пуçне хунă. Тете паттăр, хастар салтак пулни савăнтарать, анчах çамрăклах ĕмĕрлĕхе куçне хупни чĕрене ыраттарать.

Хаклă пулнă халăхшăн çак çĕнтерÿ. Вăл хăйĕн мĕнпур вăйне, пĕлĕвне, сывлăхне тăратнă тăшмана хирĕç. Вăрçă пуçланнă çул Сергей тете Аслă Аксури вăтам шкулта 9-мĕш класра вĕренетчĕ. Çавăн чухнех вăл ват çынсемпе, хĕрарăмсемпе, хăйпе пĕр çулхи яшсемпе хутшăнса Тархан районне блиндажсем, окопсем, танксене чарса лартма çырмасем чавма çÿрерĕ. Кĕрхи сивĕ çумăрсенче те, шартлама сивĕсенче те 1942 çулччен ĕçлерĕç вĕсем. Ку ĕçе Çĕпрел районĕнчи Çĕнĕ Йĕлмелĕнчен кăна çĕр çын ытла хутшăннă.

1942 çулхи июнь уйăхĕнче тете вунă класлă шкултан вĕренсе тухрĕ. Экзаменсем парса пĕтерсенех, июнĕн 10-мĕшĕнче, ăна çара ăсатрăмăр. Кÿршĕ ял каччипе Ананий Казаковпа тухса кайрĕç вĕсем хĕсмете.

Малтанхи кунсенче Сергей тетерен çырусем йышлă илеттĕмĕр. Çырăвĕсене пĕтĕм урампа пĕрле вулаттăмăр. Ырă хыпарсем килсен савăнаттăмăр, камăн та пулсан килне хурлăхлă çыру е вилĕм хучĕ килсен пĕрле йĕреттĕмĕр. Çапла пулнă ĕнтĕ вăрçă çулĕсем: савăнăçа та, хуйха та çынсем пĕр пек пайланă.

Килти архивра тетен икĕ çырăвĕ халĕ те упранать-ха. 1942 çулхи июнĕн 28-мĕшĕнче çырнă çырăвĕнче вăл салтак пурнăçĕ çинчен хыпарласа пĕлтерет. Тăвансене, юлташсене тунсăхлани, килĕнчен çыру кĕтсе илейменнипе кулянни, хурланни пирки çырать тата пăртак та пулин укçа ярса пама ыйтать. Çыру вĕçĕнче кăна аякра артиллери снарячĕсем çурăлни илтĕннине çырнă. Апла тете çапăçу вырăнĕсенчен инçе те пулман.

Иккĕмĕш çыруне 1942 çулхи августăн 9-мĕшĕнче çырнă. «Юратнă Атте, Анне, шăллăмсемпе йăмăксем, пысăк салам сире салтакран. Çак кун эпĕ çапăçăва тухса каятăп. Атте, анне, ан манăр хăвăрăн Сергей ятлă ачăра, тен, сывах таврăнăп. Сирĕн юратнă ывăлăр Сергей».

Çак кĕске çыру Иваново облаçĕнчи Тейково хулинчен килчĕ. Кунта вĕсене тăшман тылне ăсатма хатĕрлесе парашютпа сикме вĕрентнĕ.

Çавăнтанпа Сергейрен пĕр çыру та пулмарĕ. Часах «хыпарсăр çухалнă» текен хут килчĕ. Çук, таврăнаймарĕ тете, мĕн чухлĕ кĕтсен те унран урăх пĕр хыпар килмерĕ.

Вăрçă вĕçленсен те эпир Сергее кĕтме пăрахмарăмăр. Шанчăк çухалмарĕ. Темиçе хутчен те Мускав облаçĕнчи Подольск хулинче вырнаçнă Оборона министерствин тĕп архивне шыраса пăхма ыйтса çыртăмăр. Анчах вĕсенчен кашнинчех пĕр хурав пулчĕ: «Хыпарсăр çухалнă». Аттепе анне мĕн виличченех уншăн хурланса макăрчĕç. Манăн чĕререн те тете сăнарĕ тухмарĕ. Кашни кун ача чухне почтăна чупаттăм, темшĕн шанаттăм унран хыпар килессе.

Вунă çул каялла Хусанти педагогика институтĕнче йĕркеленнĕ «Юр десанчĕ» шырав ушкăнĕ Тутарстанран вăрçа кайса пуçĕсене хунисен, хыпарсăр çухалнисен вилтăприйĕсем ăçта вырнаçни çинчен пĕлтерчĕ. Хăш районтан тухни паллă пулманнисен списокĕнче эпир тетен ятне тупрăмăр. Унта: «Хĕрлĕ Çар салтакĕ Сергей Никифорович Егоров 1942 çулта августăн 18-мĕшĕнче Волгоград хулинче вилнĕ», — тесе çырнă. Часах çак хыпарах Оборона министерствин тĕп архивĕнчен те çитрĕ (опись №818883«С», дело №1949, лист №20).

Хирĕç эпĕ те Волгоград облаçĕн çар комиссариатне çыру ятăм. Хурав чылай кĕттермерĕ. Çар комиссарĕ Атаманчук генерал-майор çапла çырса янă: «Для сведения сообщаю, что 115-й гвардейский СП 38-й гвардейской СД принимал участие в боевых действиях 18 августа 1942 года в районе хутора Шохин Иловлинского района».

Тепĕр çырăва эпĕ Иловля райвоенкоматне çыртăм. Унтан çапла пĕлтерчĕç: «Красноармеец 115-го гв. СП 38-й гвардейской СД Егоров Сергей Никифорович принимал участие в боях и занесен в список погибших по Иловлинскому району. Захоронен в братской могиле на окраине хутора Шохин Сиротского сельсовета. На могиле, на постаменте двухметровой высоты воздвинут бюст воина». Çак хыпар килсенех хам сывă чухне ун вилтăприйĕ çине кайса килме тĕв турăм. 2001 çулхи июнь уйăхĕнче çитсе килтĕмех Волгоград хулине. Иловля районĕн администраци пуçлăхĕ Владимир Петрович Киямов Шохин хуторне çитме мана хăй машинине пачĕ.

Вырăнти çынсем каланă тăрăх, нимĕç çарĕсем Сталинграда кĕрес умĕн Шохин — Сироткино фронт участокĕн 7-мĕш çухрăмĕнче Дон шывĕ урлă каçасшăн пулнă. Анчах пирĕн салтаксем тăшмансене хирĕç çирĕп тăрса вĕсене каçарман. Çав хаяр çапăçура 15–20 пин салтак пуçĕсене хунă. Пилĕк уйăх — 1942 çулхи августран пуçласа 1943 çулхи январьччен, пирĕннисем иртен пуçласа каçчен тăшмансем пуçаракан 10–12 атакăна хирĕç тăрса фашистсене Дон шывĕ патне яхăнне те яман. Шохин — Сироткино фронт участокне сыхланă чух кашни каç кунта çĕнĕ чăссем килсе тăнă. Кунĕпе çапăçса ĕмĕрлĕхех куçĕсене хупнă салтаксене сыввисем улăштарнă. Хăйсене те çак шăпах лекессе пĕлсе те вĕсем çапăçуран пăрăнман. Çапла кашни кун пилĕк уйăх хушши. Фашистсем вара кăнтăр еннелле çаврăнса Дон урлă урăх çĕртен каçса Сталинград патнелле кайнă.

Пирĕн салтаксен паттăрлăхĕнчен, тăшмана хирĕç ăçтан çавăн чухлĕ вăй кăларнинчен чăннипех тĕлĕнмелле, мĕншĕн тесен вырăнĕ кунта усă, вăрман таврашĕ çук, пытанма та вырăн пулман-çке. Çакăнти пĕчĕк сăрт паянхи кун та пĕтĕмпех сухаланса акăнмасть: çакăнта ĕнтĕ вăл — тăванлăх масарĕ. Паянхи кун унта миçе пин çын пытарнине никам та пĕлмест.

Çакăн пек пысăк çухатусемпе кĕтсе илнĕ Сталинград çĕнтерĕве. Шохин хуторĕнчи тăванлăх масарĕ çумĕнче тинтерех тупăннă вунпĕр вилтăпри хушшинчи мрамортан тунă палăк çинче ман Сергей тетен ячĕ те пур. Çакă ĕмĕрлĕхех чĕреме касăлса кĕрсе ларчĕ. Ĕмĕр манмăп Сталинград çапăçăвĕнче, вăрçă хирĕнче пуçĕсене хунă паттăрсене.

Юлашкинчен педагогика университечĕн «Юр десантне», Волгоград облаçĕнчи Иловля районĕнчи Сироткино станицинчи ял хуçалăх производствин председательне Валентина Алексеевна Жуковăна, хăйтытăмлăх председательне Валерий Иванович Серегина, Ветерансен канашĕн председательне Василий Иванович Бурова «Сувар» хаçат урлă пысăк тав калатăп, çирĕп сывлăх, ĕçре çитĕнÿсем сунатăп.

**Виктор ЕГОРОВ.**

ПУРНĂÇ КАÇАЛĂКĔ

# КАМĂН ÇĂКĂРĔ ТУТЛĂРАХ

**Çăкăр мĕн авалтан пурнăçра пуç пулса тăнă. Пире хăть мĕнле тутлă апат парсан та, çăкăрсăр ăна çиейместпĕр. Паян калаçăва Тутарстан халăхĕ мĕнлерех çăкăр çини пирки пуçлăпăр, унăн пахалăхĕ, техĕмлĕхĕ çинчен сăмах тытаканни Раççей правительствин патшалăх çăкăр инспекцин Тутарстанри управленийĕн пуçлăхĕ Мунир РЕЗВАНОВ.**

— Тутарстанра хальхи вăхăтра тăватçĕре яхăн тĕрлĕ харпăрлăхра тăракан предприяти çăкăр пĕçерет. Вĕсенчен 15-шĕ — пысăк заводсем. Хусанта кăна 8 завод ĕçлет. Вĕсем кăларакан продукцин пахалăхне шăпах пирĕн управленин инспекторĕсем тĕрĕслесе тăраççĕ. Республикăра управленин 4 филиалне йĕркеленĕ: Çырчаллинче, Пĕкĕлмере, Нурлатра тата Пăвара. Пĕр район та тĕрĕсленмесĕр юлмасть. Япăх çăкăра ытларах харпăр çынсем тытакан пĕчĕк пекарньăсенче пĕçереççĕ.

**— Мунир Гафиуллович, ăçта, хăш хулара чи паха, техĕмлĕ çăкăр пĕçереççĕ паян?**

— Çырчаллинче. «Челны-хлеб» акционер обществин предприятийĕ йĕркелÿ тата технологи енчен малтисен ретĕнче. Темле йĕс пырлă çын та вĕсен çăкăрне тутанса пăхсан кăмăллă юлать. Çырчаллисем, ытарлăн каласан, хăйсен çăкăрне хиртенех пĕçерме пуçлаççĕ. Ака умĕн хуçалăхсене хăйсен кĕсйинчен укçапа пулăшаççĕ. Пурне те мар, паха тĕштырă çитĕнтерекене çеç лекет нухрат. Тырпула пухса илсен ял хуçалăхĕсем укçа пулăшăвне тырăпа татаççĕ. «Челны-хлеб» тулăра клейковина тытăмĕ 25 процентран иртет пулсан кăна йышăнать.

Предприятин хăйĕн склачĕсем, çăнăх авăртмалли комплекс пур. Çырчаллисем ют çĕртен кÿнĕ çăнăхпа пачах та усă курмаççĕ. Туса кăларнă продукцие те фирма лавккисенче сутаççĕ. Вĕсенче çăкăра упрама лайăх условисем никĕсленĕ, хăвăрт сутса пĕтермелли опыт та пухнă. Çăкăрăн ĕмĕрĕ кĕске вĕт.

Сăмах май çак хулари пирĕн филиалăн инспекторĕсем çинчен те ăшă сăмах каласа хăварар. Людмила Глуховăпа Римма Гайсина хăйсен тивĕçĕсене тĕплĕн пурнăçласа пыраççĕ. Çавăнпах хула халăхĕнчен çăкăр пĕçерекенсем çине ÿпкелешÿ çук.

**— Хусанта тата ытти хуласемпе районсенче паха çăкăр пĕçереççĕ-и?**

— Тĕп хулара 2 тата 3-мĕш номерлĕ çăкăр завочĕсен продукцине халăх хапăлласа туянать. Юлашки вăхăтра 5-мĕш завод та вĕсен шайне туртăнать. Районсенчи предприятисенчен Чистайри çăкăр завочĕ халăх хушшинче пысăк авторитетлă.

**— Пирĕн республика Раççейĕн ытти регионĕсемпе çăкăр пахалăхĕпе тавлашма пултарать-и?**

— Тутарстанри çăкăр япăх мар, уншăн пите хĕретме тÿр килмест. Тавар кăларакансен продукцийĕ, паллах, пĕр-пĕринчен уйрăлса тăрать. Хатĕр-хĕтĕрсем ĕçлесе кивелнĕ пулсан та, пысăк заводсенчен пĕчĕк пекарньăсеннинчен паха çăкăр пиçсе тухать. Пысăк заводсенче технологие çирĕп пăхăнасси йĕркене кĕнĕ, чĕртавар кĕреслĕх, продукци тухаслăх хытă тĕрĕслевре тăрать. Пĕр сăмахпа — йĕркелĕхпе тирпейлĕх пысăк пусăмра. Хăш-пĕр пĕчĕк пекарньăсем те çисе тăранма çук тутлă çăкăр пĕçереççĕ. Халĕ тата пур-



те ГОСТ ыйтăвĕсене тивĕçтерекен çăнăх çине куçаççĕ. Апла-тăк, çăкăр тата та пахарах пулать. Иртнĕ октябрьте, эпир тĕрĕсленĕ тăрăх, çăкăр завочĕсенче ГОСТа хуравлакан çăнăхпа 43 процент çеç усă курнă, ноябрьте çак кăтарту 70 процента çитнĕ. Анчах та çакă пахалăх ыйтăвне веçех татаймасть-ха.

**— Лайăх çăкăр пиçсе тухасси çăнăх пахалăхĕнчен килет апла. Анчах та Тутарстан тулли çăкăр пĕçерме юрăхлах мар текен сас хура çÿрет. Имĕш, клейковина тытăмĕ çителĕксĕр...**

— Пĕртте çук вара! Тутарстанра апат-çимĕçе юрăхлă тулă ăнăçлă çитĕнтернин тĕслĕхĕсем сахал мар. Пирĕн кăтартусем тăрăх республикăн çурçĕр районĕсенчи — Арск, Кукмор — сорт лаптăкĕсенче кăçалхи тулăра клейковина тытăмĕ 28–30 процента çитнĕ. ГОСТ требованийĕсене хуравлакан çăнăх авăртма клейковина 25 процент çеç кирлĕ. Балтаси, Саба, Нурлат, Пăва районĕсенче пысăк класлă тулă туса илеççĕ. Апат-çимĕçе юрăхлă тулă çитĕнтерессинче çут çанталăк условийĕсем çеç ыйтăва татмаççĕ. Тăпра пулăхлăхĕ, агротехника, ÿсен-тăрансене хÿтĕлесси, удобренисемпе пĕлсе усă курни, вырман меслечĕсемпе вăхăчĕсем пысăк пĕлтерĕшлĕ. Республикăра кăçал хатĕрленĕ тулăн 69 проценчĕ апат-çимĕçе юрăхлă.

**— 69 процент кăнатăк, çăкăр пĕçерме республика тулашĕнчен тулă илмелле пулать-им?**

— Çук. Пирĕн тырпул çителĕклĕ. Ан манăр виçĕмçулхи рекордлă тухăç çинчен. Унăн запасĕсем халĕ те нумай. Унăн тытă-



мĕнче апат-çимĕçшĕн юрăхлă тулă та сахал мар. Мĕн пуррипе тирпейлĕ усă курсан, пирĕн хамăрăн тырпул та çителĕклĕ. Çитменнине «Татфондбанк» Пăрăнтăкра туса лартнă арман е «Сабан» тулли мар яваплă организацин авăртакан комплексĕ клейковина 23 процент кăна пулсан та ГОСТа тивĕçтерекен çăнăх хатĕрлеме пултараççĕ. Çапах та, Раççейпе илсен, ГОСТ ыйтăвĕсене хуравлакан çăнăх Тутарстанринчен самай çÿллĕ шайра. Пирĕн хăватсемпе çакăн пек кăтартусемшĕн намăс.

**— Çапах та çăкăр туянакансенчен ÿпкевлĕ çăхавсем килкелеççĕ. Е çăкăр кăвакарать, е ун ăшĕнчен пĕчĕк болтсем, гайкăсем, пусма татăкĕсем сиксе тухаççĕ. Апла-тăк, ĕç-пуç пĕр клейковина шайĕнчен кăна килмест?**

— Пайтахăшĕ технологие тата ĕçри дисциплинăна пăхăннинчен, хатĕр-хĕтĕр çĕнĕлĕхĕнчен, ĕçлекенсен ăсталăхĕнчен килет. Продукцие сутăва кăлариччен тĕплĕ тĕрĕслеврен тата та нумай килет. Пирĕн инспекцисем иртернĕ чух технологи йĕркисене пăхăнманнисене штраф парас ирĕк те пур. Вăл 200 чи пĕчĕк ĕç укçипе танлашма пултарать. Эпир çавăн пек йышăну тусан ăна суд та, прокуратура та пăрахăçлаттараймасть.Тутарстанри патшалăх çăкăр тĕп инспекторĕн йышăнăвĕ арбитражлă судра та тĕп никĕсе выртать. Маларах асăннă ăнсăртсем сиксе ан тухчăр тесе эпир инспекцинче заводсене, пĕчĕк пекарньăсене тĕрĕслемелли график тăватпăр. Унăн срокĕсене заводсемпе пекарньăсен пуçлăхĕсем пĕлмеççĕ. Çапах та уй куçлă, вăрман хăлхаллă теççĕ. Çавăнпа та графикри сроксене çулталăк хушшинче улăштаратпăр. Тĕрĕслевсем пĕр кĕтмен çĕртен пулса иртеççĕ. Кăлтăксем ытларах харпăр усламçăсем тытакан пĕчĕк пекарньăсенче тупăнаççĕ. Кăна та ăнланмалла: вĕсем хĕсĕк пÿлĕмсенче вырнаçнă, технологи ыйтнисене пурне те пурнăçлама май çук. Анчах çитменлĕхе пĕтерме вăхăт паратпăр. Енчен те усламçă асăрхаттарнине пурнăçламасан, штраф санкцийĕсем хута каяççĕ.

**— Сирĕн ĕç мехелĕсене пурне те çырма вырăн хĕсĕкрех. Калăр-ха, полиэтилен пленкипе чĕркенĕ çăкăр пайтахрах упранать-и е чĕркеменни?**

— Пленкăпа чĕркени виçĕ хут вăрахрах упранать. Анчах та эпĕ ăна ырламастăп. Гигиена тĕлĕшĕпе чи меллĕ меслет, анчах та çăкăр тути пĕтет. Пиçнĕ çăкăр «сывлама» тивĕçлĕ. Тата килĕрсенче çăкăр упракан савăтăра (хлебница) та тимлĕхре тытăр. Ăна кашни икĕ эрнере лайăх çуса тасатса типĕтĕр. Атту унта пăнтăх кăмписем ĕрчесе кайма пултараççĕ. Çăкăра упрамалли чи лайăх вырăн — холодильник. Эпир, çăкăр инспекторĕсем, «Сувар» вулаканĕсене техĕмлĕ çăкăрпа тутлă апат сунатпăр.

**Виталий ЕЛТОВ калаçнă.**

**Автор сăнÿкерчĕкĕсенче: Тутарстанра пĕçерекен çăкăр пахалăхне тĕрĕслекен тĕп инспектор М.Резванов; Хусанти иккĕмĕш завод кăмакинче пиçсе «юхакан» батонсем. Çак заводра пахалăх енĕпе ĕçлекен Нина Викторовна Маслова инженер-технолог.**